25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
18
ЮНКУН
269 (6204) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Гитлерăн вăрă-хурахла ушкăнĕ Совет Союзĕнчи культура пуянлăхĕсене çаратать, пĕтере-пĕтере тăкать

Моздок районĕнче Германи ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин особăй назначени батальонĕн 4-мĕш ротин обер-штурмфюрерне Норман Ферстера тыткăна илнĕ. Тыткăна илни совотăн çар влаçĕсене çакăн пек заявлени çырса панă:

«Советăн çар влаçĕсене

Особăй назначени батальонĕ пирки хам енчен çакна пĕлтерме тивĕçлĕ тесе шутлатăп:

1941 çулти август уйăхĕнче, эпĕ Берлинра пулнă чухне, мана, Берлинри университетра паллашнă тахçанхи пĕлĕш доктор Фокке, ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин пичет отделĕнче ĕçлекенскер, пулăшнипе 87-мĕш противотанковăй дивизионран ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви çумĕнчи особăй назначени батальонне куçарчĕç. Çав батальона ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп пуçарнипе тунă тата вăл ертсе пынипе ĕçлет.

Батальонăн командирĕ СС войскисен майорĕ фон Кюнсберг пулса тăрать. Особăй назначени батальонĕн задачи— пысăк хуласем параннă хыççăн çийĕнчех культурăллă тата историллĕ пуянлăхсене, наука учрежденийĕсен библиотекисене тытса илесси, паха кĕнекесене, фильмсене тытса илесси, вара вĕсене пĕтĕмпех Германие ăсатасси пулса тăрать.

Особăй назначени батальонĕ 4 ротăран тăрать. 1-мĕш ротăна — Германин Африкăри экспедициллĕ корпусĕ çумне, 2-мĕш ротăна — Çурçĕрти армейски группа çумне, 3-мĕш ротăна—центрти армейски группа çумне, 4-мĕш ротăна — Кăнтăрти армейски группа çумне çирĕплетнĕ. 1-мĕш рота хальхи вăхăтра Италире, Неаполь хулинче, Африкăна куçарма май пулассине кĕтсе тăрать.

Батальонăн штабĕ — Берлинра, Герман Геринг урамĕнчи 6-мĕш номерлĕ çуртра тăрать. Тытса илсе пухнă материалсене Гарденбергштрассери Адлер фирмин магазинĕн залĕсенче вырнаçтарнă.

Российăна тухса килес умĕн майор фон Кюнсберг пире Риббентропăн приказне пачĕ. Унта — мĕнпур наука учрежденийĕсене, институтсене, библиотекăсене, дворецсене тĕплĕн «шăлса тасатма», архивсене тустарса тухма тата хăш енĕпе те пулин паха пулса тăракан пур япаласем çине те алă хывма хушнă.

Манăн юлташсем каласа панă тăрăх, эпĕ пирĕн батальонăн 2-мĕш роти Ленинград таврашĕнчи дворецсенчен мĕнпур паха япаласене илсе тухса кайнине пĕлетĕп. Çав ĕçсене тунă çĕрте эпĕ хам пулман. Царское селора рота Екатерина императрицăн Пысăк дворец-музейĕнчи пурлăха тытса илсе турттарса кайнă. Стенасем çинчен Китайра тĕртсе тунă пурçăн обойăсене тата ылттăнпа эрешлесе илемлетнĕ япаласене тăпăлтара-тăпăлтара илнĕ. Пысăк ўкерчĕклĕ, пухса тунă урайне сўтсе илсе кайнă. Александр императорăн дворецĕнчен авалхи сĕтел-пукансене тата француз чĕлхипе çырнă 6—7 пин кĕнекерен тăракан пуян библиотекăна, вырăс чĕлхипе çырнă кĕнекесемпе алçырăвĕсене 5 пин ытла илсе тухса кайнă. Çав суйласа илнĕ кĕнекесем хушшинче француз чĕлхипе çырнă историллĕ мемуарлă литература тата Грецпе Рим классикĕсен библиографи тĕлĕшĕнчен питех те сайра тĕл пулакан произведенийĕсем питĕ нумай пулнă.

Эпĕ тăнă 4-мĕш рота Киевра медицинăн наукăпа тĕпчев институчĕн лабораторине тытса илнĕ. Мĕнпур оборудование, çавăн пекех тата наука материалĕсене, документсемпе кĕнекесене Германие турттарса кайнă. Çав операцие çар врачĕ Бауэр активлăн хутшăннă.

Украинăн Наукăсен Академийĕн библиотекинче пирĕн алла пуян трофейăсем лекрĕç. Унта Перси, Абиссини, Китай çырулăхĕн пачах та сайра тĕл пулакан алçырăвĕсем, вырăссемпе украинецсен летописçĕсем, вырăссен первопечатникĕ Иван Федоров пичетлесе кăларнă кĕнекесен пĕрремĕш экземплярĕсем тата Шевченко, Мицкевич, Иван Франко произведенийĕсен сайра тĕл пулакан изданийĕсем сыхланса усраннă. Киеври — Украина искусствин, вырăс искусствин, хĕвеланăçĕнчипе хĕвелтухăçĕнчи искусствăн музейĕсенчен, Шевченкăн тĕп музейĕнчен вĕсенче юлнă нумай экспонатсене Берлина илсе кайнă. Вĕсем хушшинче Репин çырнă картинăсемпе этюдсем тата портретсем, Верещагин, Федотов, Ге художникĕсен анлă ўкерчĕкĕсем, Антокольский скульптурисем тата вырăссемпе Украина художникĕсемпе скульпторĕсен ытти произведенийĕсем пулнă.

Харьковри Короленко ячĕпе тăракан библиотекăра чаплă кăларнă паха кĕнекесене темиçе пиншерĕн суйласа илсе Берлина ăсатнă. Ытти кĕнекесене пĕтерсе тăкнă. Харьковри картинăсен галерейинчен темиçе çĕршер картина, вăл шутра Айвазовскин 14 картинине, Репин произведенийĕсене, Поленовăн, Шишкинăн тата ыттисен нумай ĕçĕсене, турттарса тухса кайнă. Çавăн пекех музейри мĕнпур скульптурăсемпе пĕтĕм научнăй архива та илсе тухса кайнă. Шăтăкла-тĕрĕсене, коверсене, гобеленсемпе ытти экспонатсене нимĕç салтакĕсем илсе пĕтерне.

Краснодарта д-р Либен ялхуçалăх библиотекинчен кĕнекесем 30 ешĕке çити илнĕ. Краснодар вăрçă ĕçĕсем пынă зонăра мар, тылри управлени зонинче тăнă пирки, хуçалăх командин представителĕ Либенăн ĕçне хирĕç протест панă.

Эпĕ çавăн пекех тата Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче, Хĕвелтухăçĕнчи облаçсенче музейсемпе антиквари пуянлăхĕсене тытса илес тĕлĕшпе ĕçлекен специальнăй командăсем Альфред Розенберг штабĕ çумĕнче те пуррине пĕлетĕп.

Войскăсем мĕнле те пулин пысăк хулана йышăнса илсенех, унта çав командăсен начальникĕсем, тĕрлĕ йышши специалистсемпе пĕрле, çийĕнчех пырса çитеççĕ. Вĕсем музейсене, картина галерейисене, выставкăсене, культурăллă тата художествăллă учрежденисене пăхса тухса, вĕсем мĕнле тăнине палăртаççĕ, унтан вара хаклă япаласене пурне те конфискацилеççĕ.

Д—р Ферстер.

СС обер-штурмфюрерĕ, СС войскисен особăй назначени батальонĕн 4-мĕш роти.

Мускав, 1942 çулти ноябрĕн 10-мĕшĕ».

Тыткăна лекнĕ Ферстерăн заявленийĕнче гитлеровецсем оккупациленĕ совет районĕсенче çаратса илнĕ паха япаласен — культура, наука тата истори тĕлĕшĕнчен паха япаласен пĕчĕк пайне çеç кăтартнă. Совет Информаци Бюровĕ çакна тĕп-тĕрĕс пĕлсе тăрать: Риббентропăн особăй назначени батальонĕ тата Розенберг штабĕн командисем **оккупациленĕ районсенчи наукăпа культура учрежденийĕсенче юлнă питех те паха япаласене çаратса пĕтернĕ тата пĕтерсе тăкнă.**

Слуцк хулинчи Павел дворецĕнчен Германие дворецри питĕ паха сĕтел-пукансене илсе кайнă, вĕсене вырăссен чаплă мастерĕ Воронихин тата XVIII ĕмĕрхи чи пысăк мастерсем хатĕрленĕ ўкерчĕксем тăрăх тунă, çав дворецран тата XVIII ĕмĕрхи чи сайра тĕл пулакан фарфор коллекцийĕн пĕр пайне илсе кайнă. Дворецра хаклă йывăçран тунă паркета, художество тĕлĕшĕнчен питех те паха пулса тăраканскере, сўтсе илнĕ. Дворецăн стенисем çинчен барельефсене, гобеленсене тата стена çинчипе маччари плафонсене сирсе-сўсе илнĕ. Алăк тăписене тата алăка хитрелетекен япаласене, бронзăпа йывăçран тунăскерсене, хăйпăтса илнĕ. Дворец паркĕнчен скульптурăсене илсе кайнă.

Петергофри дворецсенчен нимĕçсем çыпăçтарса тата касса кăларса хитрелетнĕ япаласене, коверсене, картинăсене пурне те илсе кайнă. «Самсон, раздирающий пасть льва» ятлă статуя-фонтана, скульптор Козловский тунăскере, пăчкăпа касса ваклана та Германие ăсатнă. Турипе анатри парксенче «Нептун» ятлă фонтана, «Большой каскад» террассине хитрелетекен скульптурăсене тата скульптурăллă ытти паха произведенисене хăйпăтса илнĕ. Петергофри пысăк дворец, Петр вăхăтĕнчех тума тытăннăскере, çаратнă та варварла çунтарса янă.

Львов хулинче нимĕç оккупанчĕсем хула музейне пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ. Вырăссемпе украинецсен мастерĕсен картинине тата коверсемпе авалхи фарфора темиçе теçетке ешĕк Германие янă. Львов музейĕнчи сехетсен питĕ чаплă коллекцине те, çав шутра XVI, XVII тата XVIII ĕмĕрсенчи мастерсем тунă 2 пин ытлăн сехете, Германие турттарса кайнă. Львоври библиотека пушанса юлнă: чи паха кĕнекесене Германие ăсатнă, вырăссемпе украинецсен писателĕсен темиçе пин томне çунтарса янă.

Одессăра нимĕç войскисемпе румын войскисем Хĕвеланăçĕнчи искусствăн музейне тата вырăс искусствин художествăллă музейне çаратнă. Перов, Серов, Боровиковский, Левитан, Рубо, Шишкин тата ытти художниксем çырнă нумай картинăсене, грек мастерĕсемпе римлян мастерĕсен скульптурисен питех те паха ўкерчĕкĕсене, çавăн пекех тата авалхи сĕтел-пукансен коллекцине Германие илсе кайнă. Нимĕç вандалĕсем Одессăри государственнăй публичнăй библиотекăна пĕтерсе тăкнă, çав библиотекăра 2 миллион ытла кĕнеке пулнă; вăл библиотекăри чи паха алçырăвĕсене тата питех те сайра тĕл пулакан произведенисене Германие илсе кайнă.

Винницăра гитлерла çаратуçăсем облаçри Горький ячĕпе тăракан библиотекăна, 470 пин томлăскере, çаратса пĕтернĕ. Вăтам ĕмĕрте алăпа çырса кăларнă литературăн питех те сайра тĕл пулакан экземплярĕсене тата XVI-мĕшпе XVII-мĕш ĕмĕрсенче пичетлесе кăларнă малтанхи кĕнекесене çаратса кайнă. Винницăри медицина институчĕн нумаях пулмасть туса лартнă морфологи корпусне çаратнă. Унтан медицинăри питех те тĕрĕс инструментсене, тĕрлĕ микроскопсене, микроскоппа пăхма питĕ çўхе сий касса кăлармалли приборсене — микротомсене, поляриметрсене, рентген аппаратурине тата ыттисене те илсе кайнă.

Черниговра Украинăри аваллăхсен чаплă коллекцине, Тарновский пухнăскере, салатса пĕтернĕ (Тарновский вăл Украина халăхĕн историйĕ тĕлĕшпе тата Украина деятелĕсемпе писателĕсен пурнăçĕ çинчен темиçе çул хушши материалсем пухнă). Çав коллекцирен питĕ паха алçырăвĕсемпе картинăсене, вырăссемпе украинецсен писателĕсен сăнĕсене тата вырăссемпе украинецсен мастерĕсем тунă иконсен пысăк ушкăнне вăрласа кайнă.

Киево-печерски лаврăра нимĕçсем Киеври митрополитсен архивĕнчи документсене тата тĕнчери литературăн питех те паха памятникĕсене пухнă Петр Могилăн библиотекинчи кĕнекесене илсе кайнă.

Киеври наукăпа тĕпчев институчĕсенче нимĕçсем мĕнпур библиотекăсене, архивсене тата лабораторисен оборудованине çаратса пĕтернĕ. Сăмахран, медицина институтĕнчен Германие питĕ сложнăй приборсене — микропроекционнăй аппаратсене, микроманипуляторсене, микроскопсене, микротомсене тата медицинăра усă куракан ытти тĕп-тĕрĕс оборудование, вуншар миллион тенкĕ тăраканскере, Германие илсе кайнă.

Полтавăра нимĕçсем облаçри библиотекăна çаратнă, çав библиотекăра 500 пин том кĕнеке пулнă. Унтан çаксене вăрласа кайнă: Гомерăн «Илиадине» вырăсла куçарнă Гнедичăн пĕтĕм библиотекине, вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрхи писателĕсен — Пушкинăн, Жуковскиян, Гогольăн, Крыловăн тата ыттисен произведенийĕсен пĕрремĕш изданийĕсене, авторсем хăйсем алă пуснăскерсене. Перяславльри духовнăй семинарин Российăра чи авалхи библиотека шутланакан библиотекинчи мĕнпур кĕнекесене, питех те сайра тĕл пулакан памятника—алăпа çырса кăларнă Пересопницки евангелие, çавăн пекех тата чиркĕвĕн авалхи вуншар изданийĕсене, Сервантесăн испанец чĕлхипе пĕрремĕш хут кăларнă «Дон-Кихот» кĕнекине, 1812 çулхи отечественнăй вăрçă 100 çул тултарнă тĕле пухнă юбилейлĕ коллекцие, японец чĕлхипе пурçăн хут çине пичетлесе кăларнă авалхи 500 кĕнекене.

Полтаври музейран Германие вырăссен, украинецсен тата поляксен чаплă мастерĕсем çырнă картинăсене 60 ешĕк ытла илсе кайнă.

Совет халăхĕн наука, культура тата истори тĕлĕшпе паха япаласене çаратнине кăтартакан çак фактсемпе ытти йышлă фактсем, ку документра кăтартса пама май çуккискерсем, çакна тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ: **Совет Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче пур çĕрте те тăвакан çаратусем вĕсем Германи правительстви тўрремĕнех хушнă тăрăх пулса пыраççĕ, вĕсем государство хăй организованнă тăвакан ĕçсем.**

Нимĕç çарĕ хăй профессиллĕ бандитсемпе çаратуçăсен кĕтĕвĕ пулса тăнине пĕтĕм тĕнчене тахçанах кăтартса панă. Анчах Германия хĕçпăшаллă вăйĕсен составĕнче **специальнăй формированисем**—Европăри вăхăтлăха тытса илнĕ çĕршывсенче тата ССР Союзĕн районĕсенче мĕнпур культурăллă тата историллĕ пуянлăхсене çаратас ĕçе официальнăй йĕркепе хушнă тăрăх туса пыракан **специальнăй формированисем** пурри çинчен халиччен никам та пухăшламан. Çакă питех те тĕлĕнмелле: çав подразделенисем **Германин ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви çумĕнче, урăхла каласан Германи правительстви çумĕнче** тăраççĕ. Апла пулсан вара, вĕсен преступникла ĕçĕсемшĕн Германи правительстви мĕнпур уголовнăй тата материальнăй ответлăха тытать. Гитлерла правительство салтаксене чарса тăмасть кăна мар, пачах та урăхла, тĕрлĕ министерствăсем çумĕнче вăрăхурахсемпе мародерсен специальнăй батальонĕсемпе командисене туса, хăй çав çаратусен **организаторĕпе хавхалантаракан**ĕ пулса тăрать. Государство енĕпе анлăн туса йĕркеленĕ çавнашкал бандитла çар организацийĕпе тĕнче малтанхи хут тĕл пулать.

Вăрçă вăрçмалли пĕтĕм тĕнчере йышăннă мĕнпур законсемпе йăласене гитлеровецсем пĕр тытăнса тăмасăр пăсса таптаса пыраççĕ. Тип çĕр çинчи вăрçăн законĕсемпе йăлисем çинчен 1907 çулти октябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă Гаагăри конвенцин 6-мĕш статьи,—çав конвенци çумне Германи те хутшăннă, — халăха сутта кăлармалли учрежденисен, художествăллă учрежденисен харпăрлăхĕсене, çавăн пекех тата историллĕ памятниксене, наукăллă тата художествăллă пуянлăхсене, уйрăм çынсемпе обществăсем аллинче, çавăн пекех государство аллинче тăраканскерсене, тытса илме, сиенлеме тата пĕтерсе тăкма чарать. Мĕнпур цивилизованнăй халăхсем йышăннă вăрçă вăрçмалли правилăсемпе законсене гитлерла ушкăн преступникла таптаса тăкать.

Гитлеровецсем ССР Союзĕнчи халăхсен культура пуянлăхĕсене пĕтерсе тăкаççĕ, çаратаççĕ. Вĕсем наука пуянлăхĕсене, искусствăпа литература произведенийĕсене, аваллăх памятникĕсене çаратаççĕ, пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Вĕсем вырăссен нацилле культурине тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсен нацилле культурине тĕппипех пĕтерсе тăкасшăн. **Вĕсем совет çыннисене нимĕçлентерме тата вĕсенчен нимĕç баронĕсен чĕмсĕр чурисем туса хума çăмăлрах пултăр тесе, ССР Союзĕнчи халăхсен материальнăй тĕлĕшпе кăна мар, çавăн пекех тата шухăш-кăмăл тĕлĕшĕпе те хĕçпăшалсăрлантарас тĕллеве лартнă.**

Гитлерла мерзавецсем пирĕн çĕр çинче тунă тискер ĕçсене совет халăхĕ нихçан та манмĕç. Совет халăхĕн культура пуянлăхĕ çине сĕмсĕррĕн алă тăснă гитлерла вăрă-хурахла правительство тата вĕсемпе пĕр каварлисем тивĕçлипе туянĕç. Хăйсене правительство тесе чĕнекен Берлин шăтăкĕнчи вăрăхурахла шайккăн пуçлăхĕсем те, вĕсен вăрă-хурахла çавтери тискер планĕсене пурнăçа кĕртекенсем те ответ тытассинчен пăрăнаймĕç. Совет халăхĕн айăплакан алли мĕнпур вăрă-хурахсемпе çаратуçăсене, вĕсем кирек ăçта пулсан та, çитсе ярса тытĕ, вĕсем тунă мĕнпур приступленисемшĕн тивĕçлипе туянтарĕ.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

СССР Наукăсен Академийĕн юбилейлĕ сессийĕ Сталин юлташа янă салам

ХАКЛĂ ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ!

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă историллĕ кунсенче СССР Наукăсен Академийĕ Сире, Ленин соратникне, Октябрьти çĕнтерўсен организаторне, совет халăхĕн çулпуçĕпе учительне хĕрўллĕ салам ярать.

25 çул каялла революцин вут-çулăмĕпе çил-тăвăлĕнче Совет государствине туса хунă. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, Ленинпа Эсир ертсе пынипе, ирĕклĕ пурăнма право çĕнтерсе илчĕç.

Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче пирĕн çĕршыв чаплă çĕнтерўсем турĕ. Совет Союзĕнче, тĕпрен илсен, социализмлă общество туса хунă. Сталинла пятилеткăсем пирĕн çĕршыва чи малти ретре тăракан индустриллĕ держава туса хучĕç, колхозсем нумай миллионлă хресченсене пуян та культурăллă пурнăçа хутшăнтарчĕç. 25 çул хушшинче совет интеллигенцийĕ хăватлă вăй пулса тăчĕ. Совет Союзĕнче наука ĕçĕ халиччен курман пек анлăн саралса кайрĕ. СССР Наукăсен Академийĕ, совет влаçĕ пулнăранпа, вырăс наукин чаплă традицийĕсене ўстерсе пырса, пĕлĕвĕн пур отраслĕсенче те пысăк çитĕнўсем турĕ.

Пурнăç çуллен илемлĕрех, нумай енлĕрех, телейлĕрех пулса пычĕ. Çак тĕлĕнмелле чаплă пурнăçа, пысăк ăспа та пултарулла ĕçпе тунă çак пурнăçа ĕнтĕ юнпа урса кайнă хаяр тăшман— Германи империализмĕ—ултавлăн та ирсĕррĕн çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв умне вилĕмле хăрушлăх килсе тухрĕ. Совет ученăйĕсем çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: Германи вăрă-хурахĕсене хирĕç пыракан вăрçăра совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери цивилизаци кунçулĕшĕн кĕрешет. Гитлерла государствăна пĕтерсе тăкассинчен, гитлерла çара çапса аркатассинчен тата Европăри гитлерла «çĕнĕ йĕркене» пĕтерсе хурассинчен пахарах задача çук та.

Çак хăрушă кунсенче совет ученăйĕсем большевикла партипе совет правительстви тавра нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕтĕçнĕ. Совет ученăйĕсем, хăйсен тăван çĕршывĕн чăн-чăн патриочĕсем пулса тăраканскерсем, çĕршывăн оборонине кашни кун вăйлатса пымашкăн тата Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалĕсене лайăхлатса пымашкăн хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пĕлĕвне пама тупа турĕç.

Аслă кăтартусем парса, Эсир СССР Наукăсен Академийĕн задачисене кăтартса патăр; вăл задачăсем,— совет çĕршывĕн çар хăватне пĕтĕм вăйпа ўстерсе пырасси, наукăпа производствăра çĕнĕлле ĕçлекенсен движенийĕн пуçĕнче тăрса ăна ертсе пырасси. Эсир панă кăтартусем пирĕншĕн çапăçури программа пулса тăраççĕ. СССР Наукăсен Академийĕн наукăпа тĕпчев институчĕсенче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн хĕçпăшалĕсене вăйлатакан лайăх майсем сахал мар тупнă ĕнтĕ. Совет ученăйĕсем хăшпĕр йышши хĕçпăшалсене лайăхлатма панă темиçе паха задание пурнăçа кĕртнĕ. Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи районĕсенчи ресурссене мобилизацилес тĕлĕшпе ĕç вăйлăн пырать.

Анчах та эпир çакна пĕлетпĕр: совет науки хальхинчен темиçе хут нумайрах тума пултарать тата тумалла та.

Эпир, совет ученăйĕсем, хамăр тăван çĕршыв умĕнчи, хамăр халăх умĕнчи пĕтĕм ответлăха туйса тăрса, Сире, Иосиф Виссарионович, çапла калатпăр: хамăр умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртес тесе эпир тата тăрăшарах ĕçлĕпĕр. Совет çĕршывĕн питех те пысăк ресурсĕсене оборона валли мобилизацилес тĕлĕшпе икĕ хут, виçĕ хут вăйлăрах ĕçлĕпĕр. Наука тĕпчевĕсене тата анлăрах, тата хăвăртрах сарса пырăпăр, çĕнĕ изобретенисем парăпăр, хальхи вăхăтра усă куракан хĕçпăшалсен лайăхрах тĕслĕхĕсене шухăшласа тăвăпăр, промышленноçпа ялхуçалăх тухăçлăхне малалла ўстерсе пыма пур майсемпе те пулăшăпăр.

Совет стройĕ çак иртнĕ 25 çул хушшинче мĕнпур испытанисене хисеплĕн тўссе ирттерчĕ, хăйĕн историри пурăнаслăх хăватне кăтартса пачĕ. Сирĕн ятăр халăхăн ăс-тăнĕнче ирĕклĕхе, телее, пĕтĕм этемлĕхĕн прогресне кăтартса тăракан ят пулса тăрать. Отечественнăй вăрçăн хăрушă кунĕсенче совет ученăйĕсен чĕрисем, мĕнпур совет çыннисен чĕрисем пекех, Сирĕн пата туртăнаççĕ.

Мирлĕ строительство вăхăтĕнче совет çыннисем Сталин ячĕпе çĕнĕ хуласем, çĕнĕ заводсем тўрĕç. Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç пыракан кĕрешўре паттăр Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем Сталин ячĕпе çĕнĕ чаплă ĕçсем тăваççĕ.

Сирĕн хуçăлми ирĕкĕрте, Сирĕн çивĕч ăсăрта эпир хамăр вăйсене тата эпир усал тăшмана çĕнтерессине çирĕп шанса тăрас хастарлăх тупатпăр.

Ленинпа Сталин ялавĕ айĕнче тăрса ĕçлесе, совет халăхĕ хăйĕн тăшманĕсене аркатса тăкрĕ, социализм тăвас ĕçре пĕтĕм тĕнчипе тата пĕтĕм историре пысăк вырăн йышăнса тăракан ăнăçусем турĕ. Ленинпа Сталинăн ялавĕ айĕнче тăрса совет халăхĕ фашистла варварсене аркатса тăкĕ.

Сывă пултăр эпир çĕнтересси!

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ!

Çак салама Свердловскра 1942 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче, Наукăсен Академин сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕнче йышăннă.

СССР Наукăсен Академийĕн юбилейлĕ сессийĕ

СВЕРДЛОВСК, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Свердловскра СССР Наукăсен Академийĕн сессийĕ ĕçлеме тытăннă, ăна Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă ятпа пухнă.

Сессие Академи президенчĕ В. Л. Комаров уçнă.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче Наукăсен Академийĕ мĕнле пулнине аса илсе, академик Комаров çапла калать:

— Ун чухне пирĕн Академи пĕр научнăй институтран тата темиçе музейпе лабораторирен тăнă, унăн мĕнпурĕ те 45 академик та 212 научнăй работник çеç пулнă. 1941 çулта пирĕн 76 институт пулнă, вĕсенче 118 академик, Академин 182 член-корреспонденчĕ тата 4.700 наукăлла-техникла сотрудник ĕçленĕ. Аслă Ленин кăтартса панă çулпа пырса, Академи пысăк çитĕнўсем турĕ. Унăн ĕçĕ пирĕн çĕршыва экономика енчен хăпарса пыма вăйлă пулăшса тăчĕ, вăл наукăн мĕнпур вăйĕсене халăхсен телейлĕ пурнăçне тăвас ĕçе мобилизацилерĕ.

— Совет науки, — тет малалла академик Комаров, — пысăк çитĕнўсем турĕ. Вăл çитĕнўсене пĕтĕм тĕнчери съездсенче — биологи, физиологи тата ытти наукăсен съездсенче лайăх кăтартса панăччĕ.

Отечественнăй вăрçă совет ученăйĕсем хăйсен тăван çĕршывне мĕн тери парăнса, мĕн тери юратса ĕçленине пурте курмалла кăтартса пачĕ, — тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне академик В. Л. Комаров.—Оборона тĕлĕшпе питĕ паха ыйтусене ăнăçлăн татса панă, вăл ыйтусем пурнăçа кĕчĕç те ĕнтĕ. Хĕвелтухăçĕнчи ресурссене хамăр çĕршывăн оборони валли мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçе анлăн сарса янă.

Академи президенчĕ пур совет ученăйĕсене те икĕ хут вăйлăрах ĕçлеме, Сталин юлташ хăйĕн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчи историллĕ докладĕнче лартнă аслă задачăсене пурнăçа кĕртме кирлĕ пур ĕçсене те тума чĕнет.

Академик Комаров сĕннипе сесси участникĕсем Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яраççĕ.

Унтан академик Ем. Ярославский «Октябрьти Социализмлă Аслă революцин этемлĕх историйĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ» темăпа доклад туса панă.

Сессире темиçе саламлă телеграмма вуласа панă. Академик Байков «СССР Наукăсен Академийĕ 25 çул хушшинче» темăпа пысăк доклад туса панă

Коммунистсемпе комсомолецсем Сталин юлташăн докладне ăнлантарнă çĕрте

ЙĔПРЕÇ, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн доклачĕпе приказне ĕççыннисен анлă массине ăнлантарса парас ĕçе ВКП(б) райкомĕ районри партипе комсомолăн активне тата агитаторсене анлăн хутшăнтарчĕ.

Юратнă çулпуçăн çĕнтерў тума чĕнекен сăмахĕсем çине ответлесе, колхозниксемпе колхозницăсем çак кунсенче нихăçан пулман çĕкленўпе ĕçлеççĕ. «Правда» колхозри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ А. Синдячкин юлташ) Сталин юлташăн докладне колхозниксен пĕрлешўллĕ пухăвĕнче ăнлантарса панă. Кун хыççăн колхозниксем ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме тата государство умĕнчи парăмсене татма обязательствăсем илнĕ. Вĕсем çак обязательствăсене паян пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç.

Колхозра 9 агитатор, вĕсем пурте ĕçе кўлĕннĕ. Агитатор коммунист Семен Ильин виççĕмĕш бригадăра, коммунист Яков Иванов — пĕрремĕш бригадăра, агитатор И. Карпов — иккĕмĕш бригадăра. ВКП(б) членĕ Римская — пахча-çимĕç лартса тăвакан бригадăра Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса панă.

Çавăн пекех Буденный ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци те комсомолецсемпе коммунистсене йăлтах Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас ĕçе явăçтарнă. Колхозра 11 агитатор, вĕсенчен агитаци ĕçне уйрăмăнах коммунистка Дорина, комсомолка Малышева тата колхоз счетовочĕ Мазуров юлташсем лайăх туса пыраççĕ. Дорина юлташ колхозниксемпе пĕрле авăн çапать. Кану вăхăтĕнче колхозниксене Сталин юлташăн доклачĕпе паллаштарать, вĕсене хăйĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе стахановла ĕçе хавхалантарать. Çулпуçăн доклачĕ çине ответлесе çак колхоз членĕсем авăна çĕрĕн-кунĕн пĕр чарăнмасăр çапрĕç. Çапла ĕнер авăн çапас ĕçе вĕçлерĕç. Колхоз юлашки виç-тăватă кун хушшинче хĕрлĕ обозсем организацилесе государствăна 50 центнер тырă леçрĕ. Тепĕр 3—4 кунран колхозниксем государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене пĕтĕмĕшпех татаççĕ.

Турттарас ĕçĕн графикне пурнăçа кĕртессишĕн

ВĂРНАР. Леспромхозра чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕç начар мар пырать. Çурçулти заданирен ирттерсе кунта 2.720 кубометр вутă хатĕрленĕ. Анчах турттарас ĕçĕн хăвăртлăхĕсем вара леспромхозăн пур пункчĕсенче те тенĕ пекех çителĕксĕр. Çакă вăл леспромхозри ертсе пыракан работниксем турттарас ĕçĕн графикне куллен пурнăçа кĕртсе пырассишĕн кĕрешменнинчен килет.

Сталин юлташăн кăçалхи Октябрь уявĕнче тунă докладне ăнлантарса панă хыççăн рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ўсрĕ. Чаплă стахановец Г. Егоров юлташ, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, кашни кун 15—16-шар кубометр вутă хатĕрлет. Н. Прокопьев, Николаев, А. Медведева, И. Михайлов юлташсем те нормăна 2 хут ирттерсе тултараççĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ўсни вутă турттаракансем хушшинче те палăрать. И. Семенов, О. Курбанова лавçăсем куллен 2,5 кубометр турттарас вырăнне 5—6 кубометр турттараççĕ.

Çавăн пек нормăна ăнăçлăн тултарса ĕçлекенсен хисепĕ леспромхоз коллективĕн 80 процента çитет.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче, Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен 8.000 тоннăна яхăн водоизмещениллĕ тапкерне путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче çапăçусем пынă. Противник пĕр полк таран пехота вăйĕпе хулан заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Çав атакăсенче гитлеровецсем пысăк çухатусем тӳснĕ, анчах нимĕнле ăнăçу та тăваймаи. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, активлăн кĕрешсе, противника вăл икĕ кун каялла йышăнса илнĕ рубежсенчен хĕссе кăларнă. Кун каçиччен противникăнне 1.500 салтакпа офицер таран вĕлернĕ е амантнă, нимĕçсен 2 танкне, 6 орудине, 17 минометне, 11 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 10 дзотпа блиндажне çĕмĕрнĕ. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата разведка тунă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем 105 миллиметрлă туппа, 3 блиндажа тата тăшманăн пехотине пĕр взвода çити пĕтерсе тăкнă. Икĕ соединенин снайперĕсем кун каçа 120 гитлеровеца вĕлернĕ. Пирĕн зенитчиксемпе пехота нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ, 10 самолетне сиенленĕ. Унсăр пуçне, пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче противникăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн кĕрешнĕ; противник хирĕç персе тăнине çĕнтерсе, вĕсем кăштах малалла куçнă. Н-ски подразделенири Кандыбы юлташ ертсе пыракан танкистсем нимĕçсен 4 танкне тата пĕр автомашинине персе çĕмĕрнĕ. Ватрушин лейтенантăн танк экипажĕ противникăн 2 танкне тата пĕр противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă. Наводчик Кузьменко юлташ противотанковăй орудипе персе нимĕçсен йывăр танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр участокра противник малалла куçнă пулнă. Пирĕн подразделенисем контратака тунă та тăшмана хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă.

Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 100 вилли ытла выртса юлнă. Тăшман пирĕн пĕр объекта тапăннă чухне пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

* * *

Волхов фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник, пирĕн боецсем йышăннă халăх пурăнакан пункта каялла туртса илес тесе, темиçе хутчен атакăланă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Тĕрĕсрех палăртнă даннăйсем тăрăх, çав халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçусенче икĕ кун хушшинче нимĕççен 1.500 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* *

Карели фронтĕнче Н-ски соединенин снайперĕсем виçĕ кун хушшинче противникăн 179 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Снайперсем Заватский, Назаров, Закматов, Петриченко тата Лавров юлташсем пĕр кун хушшинче 12 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ противникăн çар поездне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата 20 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав отрядри партизансемех юлашки кунсенче нимĕçсен 9 автомашинине, 4 мотоциклне пĕтерсе тăкнă тата 48 нимĕç салтакне вĕлернĕ

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çак кунсенче нимĕçсен фашистла войскисенчен ирĕке кăларнă ялта лейтенант Николай Меньшиков, красноармеецсем Сергей Архипов, Иван Юрко, Иван Орешкин, Виталий Сизов тата Александр Савицкий нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ 8 красноармеецăн виллине тупнă. Курнă çынсем каланă тăрăх тата медицина енчен пăхса пĕлнĕ тăрăх, гитлеровецсем çав тыткăна лекнĕ çынсене тискеррĕн асаплантарнă. Палачсем совет боецĕсен хăлхисене, пӳрнисене касса татнă, аллисемпе урисен сыпăкĕсене çапса ватнă, унтан вара пуçĕсене прикладсемпе çапса çĕмĕрнĕ.

* * *

Юлашки кунçенче Норвеги патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç вăйлăрах кĕрешме тытăннă. Осло хулинче темиçе теçетке нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тромсе çывăхĕнчи концентрациллĕ лагерьте асапланса пурăнакан çынсем восстани тунă. Нимĕç хуралĕ вĕсене сахал хирĕç тăнă, вăл часах паранннă. Норвеги патриочĕсем казармăсене çунтарса янă та тусем хушшине кайса пытаннă.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче, Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн вак групписен атакисене сирсе тăнă. Хулан кăнтăр енчи пайĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем активлăн кĕрешнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн 100 винтовка ытла тата ытти трофейăсем пуçтарса илнĕ. Иванцов тата Кратарь сержантсен орудин расчечĕсем тупăпа тӳррĕн персе нимĕçсен пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Полуектов юлташ ертсе пыракан артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 4 блиндажне çĕмĕрнĕ, минометсен 2 батарейине пусарса лартнă тата тăшманăн пехотин 3 взводне сапаласа янă. Н-ски подразделени çапăçса пырса разведка тунă. Разведчиксем противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 2 дзота сирпĕнтерсе янă, 50 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 2 станковăй пулемет тата 3 миномет тытса илнĕ, вара хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн кĕрешнĕ. Пĕр участокра пирĕн танксен ушкăнĕ противникăн оборонине савăлланса кĕрсе кайнă. Старши лейтенант Паршин ертсе пыракан танк экипажĕ гусеницăсемпе таптаса 3 противотанковăй орудие тата 4 автомашинăна çĕмĕрнĕ. Старши лейтенант Терещенко танкĕ противникăн пехотине пĕр взвода çити тата унăн темиçе пулеметнăй точкине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем çав прорыва пĕтерсе лартма хăтланса, унта васкаса 12 танк янă. Пуçланса кайнă çапăçура пирĕн танкистсем противникăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсен йышлăрах вăйĕсем пирĕн Н-ски подразделени хӳтĕлекен высотана атакăланă. Совет боецĕсем пулеметсемпе персе противникăн речĕсене арпаштарса янă, унтан вара контратака тунă. Гитлеровецсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 160 вилли выртса юлнă.

* * *

Калинин фронтĕнче Н-ски чаçăн разведка тăвакан группи противникăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен халăх пурăнакан пĕр пунктри гарнизонне аркатса тăкнă. 90 нимĕçе вĕлернĕ, 6 пулемета тата автоматла туппа пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

Зенитнăй артиллери противникăн 2 самолетне персе ӳкернĕ

* * *

Белоруссири партизансен отрячĕ противникăн 2 поездне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 25 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Крушение пула нимĕçсен 110 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Белоруссири партизансен тепĕр отрячĕ, противникăн вак гарнизонĕсене темиçе хутчен тапăнса. 85 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсен пĕр подводнăй лодкин команди тинĕсе тухма килĕшмен. Çав подводнăй лодкăн пĕтĕм экипажне вара арестленĕ те Папенбург районĕнчи Эмсландра тунă «Эстервеген» ятлă концентрациллĕ лагере хупнă. Гестапо çакна май флотăн личнăй составĕ хушшинче тасату туса ирттерет.

Колхоз фронтовиксен ачисемшĕн тăванла тăрăшать

ИЕПРЕÇ. Хурамалти «Красный водник» колхоз (председателĕ Иванова юлташ) фронтовиксен ачисемшĕн тăванла тăрăшать. Тăлăха юлнă ачасем валли колхозра ятарласа уйрăм çурт тунă. Ачасене апатлантарма колхоз пулăшу кассинчен продуктсем уйăрса панă. Ачасене пăхас тата воспитани парас тĕлĕшпе колхозри пулăшу кассин председателĕ, ватă колхозник И. Андреев юлташ тăрăшса ĕçлет.

Ачасен çуртĕнче пурĕ 8 ача пулмалла, халĕ 6 ачана çав çурта вырнаçтарнă та ĕнтĕ. Вĕсем пĕр уйăх ытла ачасен çуртĕнче тутă, савăнăçлă, культурăллă пурăнаççĕ.

Д. М.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн

1942 çулта Тăвай районĕнчи колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕ нумай хутшăнчĕ, продуктивноçĕ ӳсрĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарчĕ: мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе—100,8 процент, сыснасем енĕпе—120 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—100,3 процент тултарчĕ.

Йăнтăрчри «Çулăм» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулхи плана сентябрь уйăхĕнчех пурнăçланă. Енесемпе сурăхсен витисене тăмпа шăлса шуратнă. Силос хывмалли плана ытлашшипех тултарнă, 6.800 центнер утă, клевер, вика ути хатĕрленĕ. Колхоз правленийĕ фермăсенче ĕçлеме шанчăклă колхозниксене уйăрнă.

Мучарти «25-ое Октября» колхозăн сĕт-çу ферми лайăх ĕçлет. Доярка Анастасия Горбунова юлташ кăçал 12 ĕнерен 12.100 литр вырăнне 14.540 литр сĕт суса илнĕ. Вăл пăхакан «Черновка» ĕне 1.982 литр сĕт панă. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх Горбунова юлташ сĕт сăвас плана ытлашшипех тултарнăшăн 331 литр тата 12 пăрăва лайăх çитĕнтернĕшĕн 75 литр сĕт илет.

Çĕнĕ Пуянкассинчи «Большевикла колхозшăн» колхозăн сысна ферми сыснасем ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Сысна пăхакансем ăмăртса ĕçлеççĕ. Александр Семенов фермăра 1930 çултанпа ĕçлет. Вăл кăçал 6 ама сыснаран 85 çăвăр илнĕ, свинаркăсем И. Иванова юлташ 6 ама сыснаран 86 çăвăр, А. Данилова юлташ 70 çăвăр илнĕ. Вĕсем пурте ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх сысна çурисем илеççĕ.

Чӳтейри «Хурçă» колхозăн чăх-чĕп ферми — районра кăтартуллă ĕçлекен ферма. Ферма заведующийĕ 60 çулхи колхозник Матвей Самарин юлташ чăх-чĕпсене зоотехника кăтартса панă пек пăхать. Чăх-чĕпсене тырă çитернисĕр пуçне минераллă япаласем—хăйăр, чул ванчăкĕсем, кантăк тата шăмă авăртса çитерет. Кусемсĕр пуçне, тăтăшах люцерна, клевер, купăста çулçисем тураса çитерет. Çакна пула чăх-чĕпсен продуктивноçĕ чылай ӳснĕ. Ферма кăçал 200 чăхран 15.000 çăмарта ытла илнĕ, государствăна планран ирттерсе 1.000 çăмарта пухса панă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çиелтĕн пăхаççĕ. Районра 2 колхоз: Лачкассинчи «Çăлтăр» колхоз—сурăхсем енĕпе, Çĕнĕ Пуянкассинчи «Большевикла колхозшăн» колхоз—мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе плана тултарман. Выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе унăн продуктивноçне хăпартасси хальхи вăхăтра питĕ кирлĕ ĕç пулса тăнине кашни колхозăн пĕр минутăлăха та манмалла мар.

В. ИЛЬИН.

Государствăна типĕтнĕ çĕрулмипе пахча-çимĕçсем ытларах парар

КАЛИНИНО. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕрулми тата пахча-çимĕçсем типĕтсе парасси колхозсен паян тумалли ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Ăна кашни колхозăн юратса тумалла. Типĕтнĕ çĕрулмипе пахча-çимĕçсем кирек мĕнле çанталăкра та пăсăлмаççĕ тата вĕсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне турттарса кайма та нумай хут çăмăлрах.

Калинински районри колхозсем государствăна кăçал çĕрулмипе пахча-çимĕçсене чылай типĕтсе памалла. Çак ĕçе районри 51 колхоз хутшăнмалла. Анчах та халĕ вĕсенчен пĕри те çак ответлă ĕçе тума тытăнман-ха. Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозăн кăçал государствăна 16 центнер ытла çĕрулми типĕтсе парас пулать. Аçăмçырмари Коминтерн ячĕпе тăракан колхозăн та 12 центнер ытла типĕтсе памалла. Анчах çак ĕçе тума ку колхозсенче пуçлама мар, хатĕрленмен те. Колхозсен председателĕсем С. Журавлевпа А. Яковлев юлташсем ку ĕçе, организацилесе ярас вырăнне, хăйсем чăрмантарса пыраççĕ. Ĕç майĕсене тата условисене тупса пама тăрăшмаççĕ.

Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Герасимов) ĕç çакăн пекех тăрать. Кунта çĕрулмине типĕтме кăмакасем те хатĕр, ытти хатĕрсем те çителĕклĕ, ку ĕçе тума лайăх пĕлекен колхозницăсем те пур. Анчах çапах та çĕрулмине типĕтме пуçламан.

Хăшпĕр колхозсенче типĕтме уйăрса хунă çĕрулмине тирпейсĕр тыткалаççĕ. Шнакассинчи «Броневик» колхозра, типĕтме уйăрса хунă çĕрулмине лайăх пуçтарса хуманнипе, вăл çĕрме пуçланă, нумай пайĕ шаннă. Колхоз председателĕ А. Никифоров çак ĕç çине çавăрăнса та пăхмасть, çĕрулмине типĕтме тытăнасси çинчен сăмах та хускатмасть.

Г. МАТВЕЕВ.

Танксен колоннине тума

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине ырласа, эпĕ çав ĕç валли 150 тенкĕ паратăп. Чăваш колхозникĕсен укçи-тенкипе тунă танксен колонни ирсĕр тăшмана аркатса тăкма пулăшĕ.

И. СМИРНОВ,
Вăрнар районĕнчи Сăнарпуç ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Ютçĕршывсенче

Сталин юлташ Ассошиэйтед пресс агентствин корреспондентне панă ответсем пирки ютçĕршывсенчи пичетре мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Сталин юлташ Ассошиэйтед пресс агентствин корреспондентне панă ответсем пирки «Санди таймс» хаçат çапла çырать: «Сталин хăй ответ парассине тата Америкăпа Англи войскисене Çурçĕр Африкăна антарнипе пĕрлĕхлĕ ĕçе питех те пысăк усă кӳни çинчен йышăнассине вăраха ямарĕ».

Сталин юлташăн отвечĕсем çинчен çырса, Гарвин «Санди экспресс» хаçатра Европăри иккĕмĕш фронт ыйтăвĕ пирки чарăнса тăрать. «Сталин малашнехине курса калани питех те тĕрĕс, Черчилль унпала килĕшет. 1942 çул вĕçлениччен Англипе Америка хăйсен интересĕсемшĕн хăйсем Африкăра пуçланă йывăр наступление, Европăра гитлеризмăн чĕрине пырса çапнипе вăйлатма тивĕçлĕ. Пирĕн иккĕмĕш фронта уçмалла. Совет Союзĕ пулман пулсан, хĕвеланăçĕнчи демократисем халĕ ĕнтĕ ăçта пулнă пулĕччĕç-ши?» тесе çырать Гарвин.

«Рейнольд ньюс» хаçат Макс Вернерăн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл çапла çырнă: Африкăри фронт çумне Европăри фронта хушсан тата Англипе Америка вăйĕсем Германи çарĕсен тĕп вăйĕсемпе тĕл пулас ĕçре Африкăпа, ăна плацдарм вырăнне хурса, усă курсан кăна, Хĕрлĕ Çар хăйшĕн тивĕçлĕ таран çăмăллăх туйса илĕ, тенĕ.

США

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: «Африкăри операцин лайăх енĕсене Сталин çавтери кĕскен те тĕрĕс характеристика панă. Сталин Ассошиэйтед пресс агентствин корреспондентне панă ответсем Россия хăйĕн хĕвеланăçĕнчи союзникĕсен ĕмĕчĕсемпе пултарулăхĕсене çĕнĕрен татах та ытларах шанма тытăннине кăтартса параççĕ. Пĕр-пĕрине шанса тăни кирек мĕнле ăнăçлă коалицишĕн те кирлĕ».

ТУРЦИЯ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине Сталин юлташ панă ответсене пур хаçатсем те курăнмалли вырăнта, шултăра заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. «Акшам» хаçат Сталин отвечĕсене çакăн пек заголовкпа пичетленĕ: «Сталинăн çĕнĕ заявленийĕ. Çурçĕр Африкăри наступлени союзниксен вăйне палăртакан ĕç пулса тăрать тата вăл Италипе Германи союзĕ саланса каяссине хăвăртлатать».

«Хабер» хаçат Сталин юлташăн отвечĕсене çакăн пек заголовокпа пичетленĕ: «Çурçĕр Африкăна десант антарни союзниксен вăрçăри хăватне кăтартса парать, тенĕ Сталин. Çав наступлени вăл Италипе Германи союзĕ саланса каяссине уçса парать». Хаçат çавăн пекех Сталин юлташăн портретне те пичетлесе кăларнă.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

АНГЛИН ЛИВИРИ НАСТУПЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ кăларнă черетлĕ коммюникере çапла пĕлтернĕ: ĕнер 8-мĕш арми Мартубăра самолетсем лармалли площадкăна йышăнса илнĕ тата вăл противникăн каялла чакакан бронетанковăй вăйĕсен юлашкийĕсене хыçалтанах йĕрлесе пырать.

Ноябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Бенгази çине тата Хĕвелтухăç еннелли çыран хĕрринчи район çине Токры патне çитиччченех бомбăсем пăрахнă. Бенгази портĕнче пушарсем тухнă, вăйлă взрыв пулнă. Истребительсем ĕнер каялла чакакан противника Хĕвеланăç Киренаикăра йĕрлесе пынă.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче каçхине Англи истребителĕсем, аялтан вĕçсе пырса, Тунисри аэродрома атакăланă. Аэродром çинче противникăн пысăк самолечĕсене 6 машинăна пĕтерсе тăкнă тата темиçе самолета сиенленĕ.

АЛЖИР ПАТĔНЧИ ТИНĔСРИ ÇАПĂÇУ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радио пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 14-мĕшĕнче ирхине ирех Алжир патĕнче тинĕсре вăйлă çапăçу пулса иртнĕ.

РУЗВЕЛЬТ ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). США-ан çар министерстви Рузвельтăн Эйзенхауэр генерал патне янă çырăвне пичетлесе кăларнă. Рузвельт çав çырура генерала тата унăн сотрудникĕсене пурне те питех те йывăр задачăна çавтери ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ ятпа ыррă сунса саламлать. Çырура Америка войскисем Çурçĕр Африкăна йышăнса илни мĕнпур çĕршывра çĕнтерĕве шанса тăрассине вăйлатни çинчен кăтартса панă. Рузвельт хăй Кенингхем адмиралпа Англин ытти руководителĕсене вĕсем питех те кирлĕ тата ăста пулăшу панăшăн тав туни çинчен пĕлтерме ыйтнă. Англичансен çав пулăшăвĕсĕр Çурçĕр Африкăри операцие пурнăçа кĕртме май килмен пулĕччĕ.

РУЗВЕЛЬТ АЛЖИР ГЕНЕРАЛ-ГУБЕРНАТОРНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт Алжирăн генерал-губернаторĕ Шатель патне послани янă. Унта Рузвельт: Америка войскисем Çурçĕр Африкăна пĕтĕмĕшлĕ противника пĕтерсе тăкас тĕллевпе пынă, тесе каланă.

Рузвельт хăй Шатель тĕнĕл держависене хирĕç пыракан кĕрешӳре союзниксемпе çыхăнса ĕçлессине шанса тăни çинчен каланă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америка войскисем Çурçĕр Африкăна аннă чухне Шатель Вишире пулнă. Анчах вăл часах Алжира таврăннă та хăй Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрлешсе ĕçлеме шутлани çинчен пĕлтернĕ.

ЖИРО ГЕНЕРАЛА ВЫРĂНА ЛАРТНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дарлан Жиро генерала Францин Çурçĕр Африкинчи çĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсен командующийĕ вырăнне лартнă.

ШАТЕЛЬ, НОГЕС ТАТА ДАРЛАН ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Германи войскисем Францин оккупацилемен зонине пырса кĕриччченех, Дарлан ирĕкре мар пулĕ ĕнтĕ тесе, Петэн Африкăна Ногес генерала хăйĕн делегачĕ туса янă. Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 13-мĕшĕнче каçхине Алжир генерал-губернаторĕ Шатель Ногес генералпа Дарланăн заявленине радиопа панă.

Ногес генерал çапла каланă: Петэн ячĕпе тата Дарлан килĕшнипе эпĕ хамăн мĕнпур полномочисене Дарлан адмиралăн аллине патăм тата унăн пур приказĕсене те пăхăнса тăратăп, тенĕ.

Адмирал Дарлан çапла каланă: Ногес килĕшнипе тата вăл ыйтнипе эпĕ Францин Африкăри интересĕсене хӳтĕлес ответлăха хам çине илетĕп, тенĕ. «Америка влаçĕсем манпа килĕшрĕç, вĕсемпе пĕрле эпĕ Çурçĕр Африкăна хӳтĕлеме шутлатăп», тенĕ вăл заявленире.

ПЕТЭН ДАРЛАНА ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Петэн Дарлана телеграмма янă. Вăл унта çапла каланă: Дарлана эпĕ «Çурçĕр Африкăна Америка войскисенчен хӳтĕлеме» янăччĕ. Дарлан йышăннă решени çав приказа хирĕç пырать, тенĕ. Петэн Çурçĕр Африкăри армие «кирек мĕн пулсан та, тĕнĕл çĕршывĕсен вăйĕсене хирĕç кĕрешмелле мар», тесе чĕннĕ.

ПЕТЭН ЖИРОПА ДАРЛАН ÇИНЧЕН ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви панă хыпар тăрăх, Петэн Африкăри çарсене чĕнсе каласа, офицерăн сăмахне пăснă Жиро генерала вăл хăйĕн ячĕпе усă курма чарасси çинчен пĕлтернĕ тата офицерсемпе салтаксене Жиро генерала пăхăнмалла мар, тесе чĕннĕ.

Кунсăр пуçне Петэн уйрăм заявлени пичетлесе кăларнă. Унта вăл Дарлан адмирала Францин суверенитетне хӳтĕлеме шанни çинчен кăтартса панă. Анчах та,—тенĕ Петэн,—«малтанхи утăмсенчен пуçласах адмирал Çурçĕр Африка çине тапăнакансемпе пĕр иккĕленсе тăмасăр килĕштерсе, кĕрешĕве чарса лартасси çинчен васкаса приказ панă та, войскăсен хирĕç тăрас хăвачĕпе шухăш-кăмăлне хавшатса янă». Петэн çакна кăтартса парать: вăл хăй «Африкăна хӳтĕлесси çинчен панă приказ пирки Дарлана темиçе хутчен те çирĕплетсе аса илтернĕ, анчах та Дарлан, пăлхав пуçарса яма хăтланакан Жиро генерала войскăсене командир пулса ертсе пырас ĕçе хăй çине илме чăрмантарас шутпа тесе, Петэнăн приказне пурнăçа кĕртме йышăнман. Халĕ ĕнтĕ вăл Жиро генерала назначени панипе килĕшнĕ». Хăйĕн çакнашкал ĕçĕсемпе Дарлан «хăйне наци тулашĕнче хăварчĕ», тенĕ Петэн, çавна май вара Петэн Дарлана мĕнпур обществăллă функцисене хутшăнас тата çарсене командир пулса ертсе пырас правăсемсĕр тăратса хăварасси çинчен пĕлтернĕ.

—⊙—

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ГЕНУЙĂНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: ноябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Генуйăна тапăнса, пĕр çухатусăрах хăйсен базисене таврăннă.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕН ЛОНДОНРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Лондонра пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕ уçăлнă. Унта 30 çĕршывран делегатсем пухăннă. Совет делегачĕсем — Павличенко, Красавченко тата Пчелинцев юлташсем зала пырса кĕнине тăвăллă оваципе кĕтсе илнĕ. Конференци уçăлнă чухне Павличенко юлташ совет çамрăкĕсен фашизма хирĕçле комитечĕн саламне вуласа панă. Конференцире Криппс тата ССР Союзĕн Англири посолĕ Майский юлташ сăмахсем тухса каланă.

ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ШВЕЦИН ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔН ЗАМЕСТИТЕЛĔ ПЫНĂ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт Швецин Пĕрлешӳллĕ Штатсене пынă ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместительне Богмана йышăннă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Богман Пĕрлешӳллĕ Штатсене икĕ çĕршыва та интереслентерекен ыйтусене сӳтсе-явма пынă.

ИСПАНИН РЕСПУБЛИКАНЕЦЛА ГЕНЕРАЛĔСЕМ РУЗВЕЛЬТА ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Британ юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Испанин республиканецла виçĕ генералĕ, çав шутра Висенте Рохо та, Рузвельта Испанирен тарса кайнă 300 пин çынна, Францин Çурçĕр Африкинчи концентрациллĕ лагерĕсенче пурăнаканскерсене, ирĕке кăларма ыйтса çыру янă.

ИСПАНИ МАРОККИНЧЕ ЛĂРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат çапла пĕлтерет: Танжертан килекен хыпарсем тăрăх, Испани полицийĕ унта республиканец пулнă çынсене йышлăн арестлет.

Испанин пиншер салтакĕсене Франци Мароккипе Испани Марокки чиккинче ларакан Арбаула янă. Испанецсене малашне уйрăм распоряжени памасăр Испани Мароккинчен тухса кайма чарнă.

АНГЛИ ВОЙСКИСЕНЕ ИСЛАНДИРЕН ИЛСЕ ТУХНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Рекьявикран пĕлтернĕ тăрăх, Исландин премьер-министрĕ Бьернсон, альтингăн (çĕнĕ составлă парламентăн) пĕрремĕш сессине уçса, çапла каланă: Англи войскисене Исландирен вăрçă ĕçĕсем пыракан урăх вырăнсене илсе тухнă, тенĕ. Исландире Америкăн оккупациллĕ войскисем кăна юлнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПОЛЯКСЕНЕ ХĂЙСЕН ÇĔРĔ ÇИНЧЕН ХĂВАЛАСА ЯРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Познаньри гитлерла наместник Грайзер çапла каланă: Познань облаçне 300 пин нимĕçе куçарнă ĕнтĕ, тенĕ.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, çак кĕтĕве поляксен çĕрĕсене тата ытти тĕрлĕ харпăрлăхĕсене нумай параççĕ

САРАДЖОГЛУ ТУРЦИН ЭКОНОМИКĂЛЛĂ ЛАРУ-ТĂРĂВĔ ПИРКИ КАЛАНĂ САМАХ

АНКАРА, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Турцин Национальнăй собранийĕн ларăвĕнче çĕршывăн экономикăллă лару-тăрăвĕ çинчен Турцин премьер-министрĕ Шюкрю Сараджоглу сăмах тухса каланă.

Турцири экономикăллă йывăрлăхсен сăлтавĕсем пирки чарăнса тăрса, Сараджоглу çапла каланă: «Вăрçă вăрçакан çĕршывсенчи тăтăшах ӳсе пыракан инкексем пирĕн чикĕсем урлă та сăрхăнса кĕреççĕ, вĕсем пирĕн çĕршывшăн çĕнĕ йывăрлăхсем кӳреççĕ», тенĕ. Сараджоглу çакна кăтартса панă: çĕршыва сыхлама правительствăн çавтери пысăк çар мобилизацилесе, хĕçпăшаллантарса тытса тăма лекет, çакă та ĕнтĕ çĕршывăн экономикăллă лару-тăрăвне хытах пырса тивет, тенĕ.

Сараджоглу Турци правительстви йышăннă мерăсем çинчен пĕлтернĕ.

ВУЛАКАНСЕНЕ

«Чăваш Коммунин» çитес номерĕ ноябрĕн 20-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарской чулочной фабрике требуется главный механик фабрики. с предложениями обращаться по адресу: Красная площадь, 1 отдел кадров Чулочной фабрики.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ: мерин, гнедой масти, 16 лет. Нашедшего просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, № 6, „Чувашпромснаб". 3—3

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 939 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 53 84 п. л.